138 Санăн яту — Иегова

(Псалом 83:18, ÇТ)

1. Çĕрпе тӳпе Турри,
Пурне те эс пултарнă,
Пире эс пурнăç панă.
Иегова — сан яту.
Эпир — сан халăху,
Çакна эпир хаклатпăр.
Сана çеç аслăлатпăр
Мĕнпур çын умĕнче.

(ХУШСА ЮРЛАМАЛЛИ)

Иегова, Иегова,
Чăн Турă эс кăна.
Тӳпере те, çĕр çинче те
Мухтаччăр сан ятна.
Эс чи аслă, чи хăватлă,
Пĕлтерĕпĕр çакна.
Иегова, Иегова,
Чыслатпăр чăн Турра — сана.

2. Эс пулăшнипеле
Кунран-кун улшăнатпăр,
Эс ыйтнă пек тăватпăр.
Иегова — сан яту.
«Свидетельсем» тесе
Пире ят эсĕ патăн.
Хыпар сарма шанатăн
Чи аслă ят çинчен.
(Хушса юрламалли)

(Çавăн пекех 2 Çулс. 6:14; Пс. 71:19; Ис. 42:8 пăхăр.)

© 2014 Watch Tower Bible and Tract Society of Pennsylvania